# Чăваш наци конгресĕн VII Аслă пухăвĕн резолюцийĕсем

### Наци пуласлăхĕ çинчен

Наци вăйĕ тата унăн пуласлăхĕ – халăх пĕрлĕхĕнче, кашни чăваш чăваша тăван ырăнне хурса хакланинче. Пĕрне пĕри кунсерен пулăшса тăрсан наци шăпине çăмăллатма май тупăнатех, ĕмĕтсемпе çÿле çĕкленни, тĕлĕксенче вĕçме вĕренни пурнăçланатех. Нимӗнле патша та, Турă та, пуп та пулăшасса шанма кирлĕ мар. Чăваш наци юхăмĕнче пĕрле пиçсе çуннă хастарсен харăс тăрса пĕр юрра юрламалла та пĕр урапа çинче ларса пырса пĕр еннелле каймалла хамăр телее шыраса. И.Я.Яковлев халалне, Н.В.Никольский, Г.Н.Волков, ытти çул пуçăмăрсем вĕрентнине тĕпе хурса наци юхăмĕнче ура хуракан юта питлемелле. Пĕр-пĕрне кÿрентерни е кĕвĕçни пĕтсе пытăр, ытлашшине каçарса, ситменнине çитерсе пурăнар. Чечен чунлă чăвашăн çунатне хуçма çăмăл, çавăнпа та ăна ăшă сăмах калаcа хавхалантарасси йăлана кĕтĕр. Чăваш чăвашшăн юлташ, хурăнташ пулнине, пĕтĕм чăваш пĕр кăкран тухнине шута илер, каçхине выртсан та, ирхине тăрсан та канăçсăр пĕртен-пĕр шухăш шĕкĕлчетĕр пирĕн чĕремĕрсене: çакă çутă тĕнчери чăвашсене пĕрлештерес тĕллевпе ырми-канми ĕçлеме кашни чăваша хăйĕн ырăнĕнче вăй патăр.

Чăваш наци юхăмĕн хастарĕсене хăйĕн паттăр улăпсен çутă сăнарĕсем çул паччăр:

Иван Яковлевпа Николай Никольскин çутлăх ĕçĕнчи улăплăхĕ, Çеçпĕл Мишшин "Пирĕн вăй" манифесчĕ, Константин Ивановăн "Вăранăр, тапранăр" йыхравĕ, Аттил империйĕн хăвачĕ, Никита Бичуринăн тухăçра пухнă ăс-тăнĕ, Петр Егоровăн чаплă архитектури, Андриян Николаевăн космоса алла илнĕ вăйĕ, Геннадий Волковăн "Тăвалла пулсан та малалла" пилĕ, Василий Николаевăн сĕм аваллăхăн парни, ытти çĕр-çĕр чăваш паттăрĕн мăн аслашшĕ-кукашшĕсен, мăн асламăш-кукамăшĕсен тупи, пехилĕ, тилмĕрĕвĕ çÿл тÿпери çăлтăрсемпе, кĕмĕл уйăхпа пĕрле турăшăн-хĕвелшĕн эпир каяс çула уçса пыччăр. Наци мăнаçлăхне хăпартма пире ăрусен хушшинчи тачă çыхăну пулăшĕ, ваттисемпе вăй-питтисен, вĕттисен чăвашлăх туйăмне ÿстерме тивĕç пархатарлă çак пулăмра аваллăхпа çителĕклĕ усă курни ырăнлă.

### Шупашкарăн тĕп çулĕ çинчен

Шупа куна 1469 çулта çыхăнтарнине пăрахăçлас, мĕншĕн тесен асăннă çул чăвашăн наци туйăмне кÿрентерет, тĕп хулан авалхи мăнаçлăхне мĕскĕнлетет, пирĕн хуламăр ĕлĕк-авалтан хăйĕн илемлĕхĕпе Атăл тăрăхĕнче чи малти ретре тăнине шута илмест, тĕпчевçĕсен вĕрентĕвĕпе килĕшсе тăмасть, чăваш халăхĕн чĕлхипе культурине тата историне аталантарма чăрмантарать, халăха суйма хăнăхтарса тĕрĕслĕх çулне ура хурать, пирĕн хула икĕ пятă пулнине ăнланма памасть, чăвашсен 1000 çулхи хулине икĕ хутчен çамрăклатни ырăнсăр. Çапла вара "Шупашкар: 500 çул" парка "Этнопарк" ят пани тĕп-тĕрĕс пулĕ, вăл паркри чăвашсен Асăну юпине тĕп туни – халăха хисеплемени.

### Халăха упраса хăварасси çинчен

Хальхи глобализаци тапхăрĕнче экономикăпа культура хыççăн халăхсене те пĕр пеклетсе ярас хăрушлăх пурри сисĕнет. Çавăнпа пирĕншĕн паян халăхăмăра упранса юлма пулăшас ĕçрен пысăкрах пĕлтерĕшли урăх нимĕн те пулма пултараймасть. Çакна ăнăçлă туса пырас тесен:

- хальхи чăваш мĕнле шухăшпа, ĕмĕтпе, тĕллевпе пурăннине тĕплĕн тĕпчесе пĕлмелле, наука пулăшăвне вăйлатмалла;
- халăха упраса тăракан тĕп вăйсенчен пĕри тăван чĕлхе пулнине асра тытса ăна пур майпа те хÿтĕлемелле, ачасене вĕрентессине, унăн обществăри пĕлтерĕшне сарса пымалла;
- чăваш сăпки ялта пулнине шута илсе пĕр яла та арканма памалла мар, ĕç ырăнĕсем туса вăхăтлăха тухса кайнисене каялла çавăрса килмелле;
- чăваш çемйинчи пĕчĕк чăваш телейлĕ ÿстĕр тесен çемье прависене анлăлатмалла, патшалăх пулăшăвне пысăклатмалла;
- урă пурнăç йĕркине йăлана кĕртмелле, çамрăксене спортпа туслаштармалла; ĕçкĕ чирне пĕтерес ĕçе психологсене, биологсене, генетиксене явăçтарса наука пулăшăвне вăйлатмалла;
- культура шайĕпе кăна ĕçлени çителĕксĕр, лайăх аталаннă экономикăсăр халăх пĕрлĕхне тытса пыма çук;
- учительсен, журналистсен, çыравçăсен, искусство çыннисен халăхăн чун хавалне, тĕнче курăмне çĕнĕ шухăшсемпе, сăнарсемпе, идеалсемпе пуянлатассине тĕпе хурса ĕçлемелле, тăван сăмахпа витĕмлĕрех усă курмалла;
- патшалăхăн халăх пултарулăхĕпе хастарлăхне шанса ĕçлемелле, халăхпа патшалăх хушшинчи хутшăнусене, çыхăнусене вăйлатса пымалла;
- ĕлĕк-авал пĕрле пурăннине шута илсе тустăвана ширанă чух Дунай тăрăхĕнчи пăлхарсене манмалла мар, туслăх кĕперĕ хывмалла;
- халăхăмăра хÿтлĕх паракан ырăн Чăваш Ен пултăр тесен Чăваш наци конгресĕн Правительствăна, Патшалăх Канашне сĕнÿсем тăратассине вăйлатмалла, Президент палăртнă тĕллевсене пурнăçа кĕртес ĕçе хастар хутшăнмалла;
- тăван халăхăмăр Раççей шăпишĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине шута илсе Мускава та сĕнÿсемпе тухмалла, унтан пулăшу ыйтма именсе тăмалла мар.

Халăх пуласлăхĕшĕн ĕçлесси кашнин тивĕçĕ пултăр!

### Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ çинчен

Халăх уявне Шупашкарти этнопаркра ирттерес, уява республикăри кашни район тата регионсенчи чăваш наци культура автономийĕсен делегацийĕсене йыхравлас. Акатуй тĕлне "Шупашкар: 500 çул" парка "Этнопарк" ят парас. Авалхи чăвашсен йăлине тĕпе хурасси халăх уявĕн шăнăрĕ пултăр. Шупашкар хула администрацине Чăваш наци конгресĕпе пĕрле Акатуя хатĕрленсе ирттерес ĕçре тăрăшуллă чăваш халăхĕ умĕнчи яваплăха туйса пулăшма ыйтас. Уява Республика кунĕпе çыхăнтарни ырăнлă пулĕ.

### Чăваш çурчĕ çинчен

Çак çурта тытса тăрассине Чăваш Республикипе Шупашкар хула администрацине хăйсем çине илме ыйтас, мĕншĕн тесен ЧНК Вĕрентÿпе Культура министерствисенче ĕçлекенсен тивĕçне чун-хавалĕпе пурнăçласа пырать, укçашăн мар, чăваш халăхне упрас, пĕрлештерес тĕллевпе вăй хурать. Чăваш халăхĕ титуллă пулнине пула пирĕн суверенлă республика, унăн хăйĕн Президенчĕ, Ялавĕ, Гимнĕ, Гербĕ, Конституцийĕ, Патшалăх Канашĕ, 21 район пур. Хулари тата ялти хура ĕçе пĕтĕмĕшпе илсен чăваш туса пырать, Республика ятне çÿлти шая хăпартакансем те чăвашсемех. 79 регионти чăваш наци культура автономийĕсен пĕрлĕх çуртне йĕркеллĕ тытса тăрасси тата ăна ЧНК аллине парасси – республика ертÿçисен тивĕçĕ.

### Вĕренÿ стандарчĕсенчи наципе регион компоненчĕ çинчен

Наци республикисен хăйсен чĕлхипе культурине аталантармалли майсем пĕчĕкленсех пыраççĕ. Чылай субъект ертÿçисем, патшалăх органĕсем çакăн çинчен уççăн каларĕç. Чăваш наци конгресĕ те хăйĕн сăмахне татăклăн калать. Сăмах 2007 çулхи раштавăн 1-мĕшĕнче йышăннă 309-мĕш Федераци саккунĕ çинчен пырать. Сиенлĕ çак саккуна пула Вĕренÿ стандарчĕсенчен «Наципе регион компоненчĕ» текен ăнлав тухса ÿкет. Ăнлавпа пĕрле наци субъекчĕсем хăйсен чĕлхине, литературине, культурине, историне вĕрентес ирĕке çухатаççĕ. Ку халичченхи тунă çитĕнÿсенчен каялла чакниех. Раççей Федерацийĕн «Вĕренÿ çинчен» тата «Раççей Федерацийĕнчи халăхсен чĕлхи çинчен» саккунĕсене те пăсни пулать. Хамăр республикăри саккунсене те хирĕçлет ку пулăм.

ЧНК çапла сĕнет:

1. Федерацин çÿлерех асăннă саккунне пăрахăçламалла, мĕншĕн тесен ку тÿрремĕн Раççей Федерацийĕн Конституцине пăсниех /68 ст., 3 п. /. Конституци тăван чĕлхене сыхласа хăварма тата ăна вĕренме, аталанма майсем туса парать.
2. Çĕнĕ вĕренÿ стандарчĕсене «Наципе регион компоненчĕ» текен ăнлава тавăрмалла.
3. Енчен те наципе регион компонентне тавăрмасан çĕнĕ вĕренÿ стандарчĕсене республикăра йышăнмалла мар.
4. Чăваш Республикин влаç органĕсен те çак саккуна йышăнмалла марри çинчен каламалла.
5. Шкулсенче наципе регион компоненчĕн сехечĕсене чакарма памалла мар.
6. Хулари шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентнĕ чух классене пайласа вĕрентмелле.
7. 11-мĕш класра чăваш чĕлхипе литературин экзаменне тавăрмалла.

### Реклама çинчен

Чăваш наци конгресĕ ял-хулара реклама парас çĕрте пысăк çитменлĕхсем курать. Тăван чĕлхепе реклама пачах çук теме те юрать.

ЧНК çапла сĕнет:

1. Чăвашла реклама парас ĕçе вăйлатмалла.
2. Патшалăх шайĕпе паракан реклама икĕ чĕлхепе пулмалла.
3. Уйрăм çын е предприяти паракан реклама чăвашла пулсан унăн хакне 50 – 70 % чакармалла.

### Чăваш çамрăкĕсен шăпи çинчен

Пуласлăх – çамрăксенче. Нацие сыхласа хăварас ĕçе çамрăксене те хутшăнтармалла. Çакна шута илсе ЧНК çумĕнчи Çамрăксен Канашĕн ĕçне вăйлатмалла. Унта хутшăнакан çамрăксен йышне çĕнетмелле.

ЧНК çапла сĕнет:

1. Çамрăксен Канашĕн йышне çĕнетес тата çирĕплетес.
2. Çамрăксен Канашĕ çинчен Положение çирĕплетес.
3. Чăваш чĕлхин кунĕ умĕн «Чăваш ачи, сассуна пар!» темăпа «çавра сĕтел» ирттерес.
4. 2009 çулхи IV кварталта Çамрăксен форумне ирттерес, ăна Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа110 çул çитнине халалас.

### Топонимика экологийĕ çинчен

Ял-хула ячĕсене ырăсла куçарнисенчен чылайăшĕ тĕрĕс мар. Урам ячĕсем те е кивелнĕ, е паянхи кунпа çыхăнса тăмаççĕ. Чăвашла топонимика ячĕсем çухалса пыраççĕ. Çулсем çинчи кăтартмăшсем, чарăну ячĕсем ырăсла çеç.

ЧНК çапла сĕнет:

1. Çулсем çинчи кăтартмăшсенче, чарăну ячĕсенче чăвашла вариантсем пулмалла.
2. Культура объекчĕсен, топонимика ырăнĕсен /çырма, çăл куç, киремет.../ паспорчĕсене йĕркелемелле.
3. Чăваш Республикин карттине чăвашла ятсене палăртса кăлармалла.
4. Раççей Федерацийĕнчи чăвашсем компактлă пурăнакан ырăнсене палăртса карттă тумалла.

### Çĕршыври наци политики çинчен

Эпир – пĕр Федерацире пурăнакан халăхсем. Эпир – Раççей пĕрлĕхĕшĕн. Анчах юлашки вăхăтра хамăр чĕлхене, культурăна хамăр тĕллĕн аталантарма Саккун, Конституци ирĕк панине пăрахăçа кăларма тытăнни сисĕнет. Мускаври хăш-пĕр чиновник чылай чухне наци аталанăвĕ çине сÿрĕккĕн пăхать.

ЧНК çапла шутлать:

1. Федераци шайĕпе наци политикине вăйлатмалла.
2. Раççей Федерацийĕн наци ыйтăвĕпе ĕçлекен уйрăм Министерство кирлĕ.
3. Саккунсем йышăнакан Федераци Пухăвĕнче национальноçсен ĕçĕпе яваплă уйрăм палата кирлĕ. Унта кашни халăх представителĕ пултăр. СССР саманинче Национальноçсен Канашĕ пулнă. Китайра та 56 халăх представителĕпе тата тĕн конфессийĕсене пĕрлештерсе тăракан Консультаци Канашĕ ĕçлет.
4. Ырăнти тата сахал йышлă халăх чĕлхисен Европа Хартине /1992 çулта Страсбургра йышăннă/ Раççей Федерацийĕн ратификацилес ыйтăва хăвартлатмалла.
5. Раççей Федерацийĕн шайĕпе нацисен ыйтăвĕсене татса памалли программа /концепци/ кирлĕ. Ăна никĕслесе Федерацин уйрăм саккунне йышăнмалла.
6. Чăваш Республикин Правительствинче национальноç ĕçĕсемшĕн яваплă министерство е тивĕçлĕ штатлă уйрăм кирлĕ.
7. Чăваш Республикин те ятарлă Наци ăслăлăх академийĕ кирлĕ. Ытти халăхăн Чĕлхе е Фольклор институчĕсем пур. Чăваш ăсчахĕсене пĕрлештермелле.
8. «Наци радио» хумне йĕркеленине ырлас. Малашлăхра «Наци телекуравĕн» хумĕ те ĕçлесе кайтăрччĕ.

### Чăваш этнокультурипе этнопедагогики çинчен

Чăваш халăхĕн аваллăхĕпе ырă йăли-йĕрки, несĕлсен ăс-хакалĕ, асатте-асаннесем, кукаçи-кукамайсем вĕрентсе калани хальхи саманара питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çакна шута илсе И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче этнопедагогика институчĕ усăнă /ертÿçи Г.Н.Волков академик/. Шел те, шкул-вĕренÿ ĕçĕнче этнокультура, этнопедагогика пĕлтерĕшне тивĕçлĕ шута илместпĕр-ха.

ЧНК çапла сĕнет:

1. Ача пахчисенче, шкулсенче несĕлсен ăс-тăнĕн ахахĕсемпе, халăхăн ырă йăли-йĕркипе туллин усă курмалла. Ку енĕпе тĕрлĕ вĕрентÿ урокĕсем ирттермелле, вĕсенче тăван анне, тăван сăмах, тăван чĕлхе пĕлтерĕшне ырăнĕ пирки ытларах калаçу пымалла.
2. Чăваш Республикинчи ятарлă вăтам, аслă вĕренÿ заведенийĕсенче пуринче те вĕренÿ программине этнокультура, этнопедагогика предметне кĕртмелле.
3. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн этнопедагогика ăслăлăх тĕпчев институчĕн статусне анлăлатмалла. Вăл тĕнчери пĕртен - пĕр çавăн пек тĕпчев институчĕ пулнине шута илсе ăна тĕнче, Раççей шайне çĕклемелле, Раççей тата Чăваш Республикин бюджечĕсенче укçа-тенкĕ уйăрас ыйтусене татса памалла.

### Чăваш наци конгресĕн VII Аслă пухăвĕн
### ЙЫШĂНĂВĚ
# 2010 çулхи Пĕтĕм Раççей халăх çыравĕ çинчен

2002 çулхи Çырав тăрăх Раççейре 1,637 миллион чăваш пурăнни паллă. Вĕсенчен 384 пинĕ /23,5%/ хăйсем чăвашла пĕлнине кăтартман. Çыравăн çак пĕтĕмлетĕвĕ те пĕтĕм Чăваш Тĕнчине "чан çапма" хитсерĕ те, хистет те: Раççейри тĕрĕк халăхĕсенчен карачайсен йышĕ – 25,4%, пушкăртсен – 24%, тывасен – 18%, якутсен – 16,7%, тутарсен йышĕ 6% ÿснĕ, хакассем 3,7%, чăвашсем 8% сахалланнă. Çапла вара тĕрĕкле калаçакан 20 халăхран чи нумай "ирĕлни" – чăвашсем. Халăх йышĕ чакнин сăлтавĕсем иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчи социаллă пурнăçпа экономикăри тарăн кризиспа, демографи сăлтавĕсемпе чакнă теме пулать. Çакăнпа пĕрлех Çыравччен влаçăн вырăнти тытăмĕсем, Чăваш наци конгресĕ, регионсенчи чăваш наци культура пĕрлĕхĕсем, хăйне "халăхăн пуç мимийĕ" теме хăнăхнă наци интеллигенцийĕ ăнлантару ĕçне çителĕксĕр тунине те йышăнмаллах.

ЮНЕСКО çĕнетсе кăларнă "Тĕнчере çухалас хăрушлăхра тăракан чĕлхесен Атласĕнче" /унăн электрон версийĕпе Парижра 2009 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕнче паллаштарнă/ çирĕплетнĕ тăрăх, тĕнчере кашни эрнере пĕр чĕлхе çухалать, Раççейри 136 чĕлхе хăрушлăхра, пĕтсе пыракан чĕлхесен йышĕнче – патшалăх чĕлхи шутланакан пушкăрт, коми, якут, калмăк, удмурт чĕлхисемпе пĕрлех – чăваш чĕлхи те.

Çак лару-тăру чăннипех те çивĕч, синкерлĕ пулнине шута илсе Чăваш наци конгресĕ çапла йышăнать:

1/ Чăваш наци конгресĕн черетлĕ Мăн Канашĕнче пĕтĕм чăваш халăхне, патшалăх влаçĕн тытăмĕсене тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, наци интеллигенцине, республика тулашĕнчи наци культура автономийĕсемпе пĕрлĕхĕсене 2010 çулхи Пĕтĕм Раççей Çыравĕ умĕн пропаганда ĕçне анлăн та тĕллевлĕн хутшăнма ыйтса Чĕнсе калани йышăнмалла, ăна "Хыпар" хаçатра, патшалăхăн республикăри мĕн пур хаçат-журналĕнче пичетлесе кăлармалла, Чăваш наци радиопа тата Раççей патшалăх телерадиокомпанийĕн филиалĕсенче – Чăвашрадиопа Чăваш телекуравĕнче – хыпарламалла, республика тулашĕнчи чăвашла хаçатсенче пичетлемелле;

2/ Чăваш наци конгресĕн Çырав ыйтăвĕсемпе ĕçлекен оперативлă штабне туса хумалла /ăна ЧНК вице-президентĕнчен пĕри ертсе пытăр/;

3/ Оперативлă штабăн республикăри кашни хулапа район центрĕсенче, халăх йышлă пурăнакан ялпоселокра ятарлă элчĕсем пулмалла;

4/ Республика тулашĕнчи чăваш наци культура автономийĕсене те вырăнсенче Çырав ыйтăвĕсемпе ĕçлекен оперативлă штабсем туса хума сĕнес;

5/ Чăваш наци конгресĕн черетлĕ Мăн Канашĕнче Çырав енĕпе ĕçлекен оперативлă штабсем пропаганда ĕçĕнче усă курмалли Методика кăтартăвĕсене хатĕрлесе йышăнмалла;

6/ Çырав кампанийĕнче Патшалăх статистика службисене çыруçăсен пысăк йышĕ кирлине шута илсе чăваш наци юхăмĕн Раççейĕн мĕн пур регионĕнчи хастарĕсен çыруçă тивĕçĕсене пурнăçлама активлă хутшăнмалла.

7/ Чăваш Республикинчи мĕн пур массăллă информаци хатĕрне, чăвашла хаçатсене, телепрограммăсене Çырав кампанийĕнче чăваш çыннин хăйне хăй палăртаслăхĕн /самоидентификаци/ ыйтăвĕпе аналитика-публицистика материалĕсем тăтăшах хатĕрлеме, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтне "Икĕ çырав хушшинче: чăваш нацийĕн хăйне хăй палăртаслăхĕ /самоидентификаци/" темăпа ăслăлăх-практика конференцийĕ ирттерме сĕнес.

Шупашкар,
2009, пуш уйăхĕ, 20







### Чăваш наци конгресĕн VII Аслă пухăвĕ
### ЧĔНСЕ КАЛАНИ
# Чăваш массăллă информаци хатĕрĕсем çинчен

Хальхи вăхăтра Чăваш Республикинче 2 Издательство çурчĕ /"Хыпар ИÇ": куллен тухакан "Хыпар" хаçат, эрнере пĕрре тухакан "Çамрăксен хаçачĕ", "Чăваш хĕрарăмĕ", "Сывлăх", "Кил-çурт, хушма хуçалăх" хаçатсем, кварталта пĕрре вырăсла тухакан "КИЛ" литература альманахĕ; "Хресчен сасси" ИÇ: эрнере иккĕ тухакан "Хресчен сасси" хаçат, уйăхра пĕрре тухакан "Тăван Атăл", "Капкăн", кварталта пĕрре тухакан "ЛИК" литература журналĕ; "Тантăш" автономи учрежденийĕ: эрнере пĕрре тухакан "Тантăш" хаçат, уйăхра пĕрре тухакан "Тетте", "Самант" журналсем/, 19 район хаçачĕ, Чăваш радиопа Чăваш телекуравĕ /"Раççей" ПТРК филиалĕсем/ чăвашла хыпар-хăнар сараççĕ. Кашни пин çын пуçне тивекен информаци калăпăшĕ енĕпе, Раççейри ытти наци республикисемпе танлаштарсан, Чăваш Ен малтисен йышĕнче. Республика тулашĕнче чăвашла хыпар-хăнар "уйĕнче" "Канаш" /Чĕмпĕр облаçĕ/, "Сувар" /Тутарстан/, "Урал сасси" /Пушкăртстан/, çак регионсенчи дубляжпа тухакан 7 райхаçат, Чĕмпĕрти "Эткер", Ĕпхÿри радиопа телекурав программисем ырми-канми ĕçлеççĕ. Санкт-Петербургри, Тюменьти, Красноярскри вырăсла-чăвашла хаçатсем те вырăнти йăхташăмăрсене тапхăрăн-тапхăрăн Чăваш Тĕнчин пурнăçĕпе паллаштараççĕ. Шел те, Тутарстанра чăвашла радиопрограмма тухма чарăннă.

2002 çулхи Çырав пĕтĕмлетнĕ тăрăх, чăвашсен вулама пултаракан йышĕ çĕр процентчĕпех вырăсла лайăх пĕлет. Чăвашла пичет кăларăмĕсен вулакансен малтанхи йышне сыхласа хăварас тесен питех те çивĕч тупăшу /конкуренци/ – лару-тăрăвĕнче ĕçлеме тивет. Тĕслĕхрен, чăваш ялĕсенчи почта уйрăмĕсенче – чăвашла пĕр кăларăм пуçне вăтамран вырăсла 15-20 кăларăм. Спутник телекуравĕ вăйлă аталаннă май тăван культурăмăрăн "сăпкинче" – чăваш ялĕнче – чăвашла хаçат-журналшăн телекуравăн вун-вун каналĕ конкурент пулса тăчĕ. Интернет сыхăнăвĕ хыттăн капланса килнĕ май хаçат-журналăн компьютерпа та тупăшма лекет. Çамрăксен пысăкран та пысăк йышĕ вулав культурине хăнăхман.

Почта тытăмĕ арканса пынине, вăл куллен кирлĕ таварсем сутас ĕçе мала кăларса тăратнине, "Раççей почти" ăнланмалла мар сăлтавсене пула Регионсен хушшинчи çырăнтару агентствине /МАП/ туса хума ирĕк пани çырăнтару хакĕсене капашсăр ÿстерсе янине, çырăнтару ыйтăвне приоритет шутĕнчен кăларнине те палăртмалла.

Вырăс мар нацисен пичет кăларăмĕсен тиражĕсен пысăкран та пысăк пайĕ совет саманинче те, çĕнетÿпе уççăнлăх /иртнĕ ĕмĕрĕн юлашки 15 çулĕ/ саманинче те, халĕ те ялсенче сарăлнă тата сарăлать.

Çÿлерех асăннă синкерлĕ сăлтавсене пула хальхи вăхăтра чăваш халăхĕ тăван чĕлхеллĕ хаçат-журнала çырăнса илесси палăрмаллах чакнă. Вырăсла кăларăмсем почта çырăнтарăвĕпе чакакан тиража хуласенче хăйсен альтернатива çырăнтарăвне йĕркелесе, киоскенче, уйрăм çынсем урлă сутса сыхласа хăвараççĕ. Анчах хула чăвашĕ /тутарĕ, çармăсĕ, калмăкĕ, якучĕ.../ "чăваш чĕлхин çĕнĕ чĕрĕлĕвĕн" /ЧНК йĕркелени, "Чĕлхе саккунне", ăна пурнăçа кĕртмелли программăсене йышăнни, хула шкулĕсенче пуринче те чăваш чĕлхипе литературине вĕрентни т.ыт.те/ саманинче те чăвашла йышлăн вулама хăнăхаймарĕ.

Чăвашла массăллă информаци хатĕрĕсен, чи малтанах пичет кăларăмĕсен лару-тăрăвĕн паянхи инкеклĕ лару-тăрăвне шута илсе ЧНК VII Аслă Пухăвĕ çапла чĕнсе калать:

1. Раççей Федерацийĕн Правительствине – "Раççей почти" ФПУП тата "МАП" ООО сĕнекен çырăнтару тарифĕсене тĕплĕ тĕрĕслесе /экспертиза/ палăртмашкăн, çырăнтарăвăн "технологи линийĕнче" "МАП" ООО пачах кирлĕ мар тытăм пулнине йышăнса ăна пĕтермешкĕн, хаçат-журнал ячĕсене çырăнтару каталогне кĕртнĕшĕн тата транспортировкăпа экспедицишĕн редакцисенчен илекен тÿлеве пăрахăçламашкăн витĕм кÿме, хаçат-журнал çырăнтарăвĕн чăн хакĕсене палăртса "Раççей почтине", кирлĕ пулсан, федераци бюджетĕнчен дотаци памашкăн палăртма;

2. Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн, Вĕрентÿ тата çамрăксен политикин, Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану, Ял хуçалăх министерствисене, район-хула, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене – чăваш халăхĕн тĕп хаçатне "Хыпара", чăвашла ытти кăларăма кашни библиотекăпа культура çуртĕнче, вĕренÿпе сывлăх сыхлавĕн кашни учрежденийĕнче, аграри секторĕн кашни организацийĕнче çырăнса илмешкĕн мерăсем йышăнма, çак тĕллевпе хăй тытăмлăх бюджечĕсенче тĕллевлĕ укçа-тенкĕ уйăрмашкăн витĕм кÿме;

3. "Раççей почти" ФПУПа – çырăнтару ĕçне тата çырăнтаруран кĕрекен укçа-тенке пухса редакцисемпе таталас ĕçе малтанхи пек унăн регионсенчи филиалĕсене шанса пама;

4. Раççейĕн мĕн пур регионĕнчи чăваш наци /чи малтанах пултарулăх тата педагогика/ интеллигенцийĕн представителĕсене, вĕсем хăйсене чăннипех халăхăн ăс-хакăл ертÿçисем тесе шутлаççĕ пулсан, – пурне те "Хыпар" хаçата, чăвашла ытти кăларăма çырăнса илме;

5. Чăваш наци конгресне, Раççей Федерацийĕн регионĕсенчи чăваш наци культура автономийĕсене – шкулсенче, культура çурчĕсенче, халăх хушшинче "Хыпарпа" унăн кăларăмĕсене, чăвашла ытти хаçат-журнала çырăнтарассине йĕркелеме;

6. "Хыпар" хаçатпа чăвашла ытти мĕн пур кăларăм чăваш халăхăн мĕн пур сийĕн ыйтăвĕсене çутатаççĕ, вĕсем халăхăмăрăн нуши-тертне, савăнăçне пĕрле пайлаççĕ, вĕсем чăваш халăхĕн пысăк та туслă килĕнче культурăпа ăс-хакăла, тăван чĕлхене сыхласа хăварас, аталантарас тĕлĕшпе нимĕнпе хаклайми пархатарлă ĕç тăваççĕ. Çавăнпа та вĕсен тиражĕсене сыхласа хăвармалла, ÿстерсех пымалла;

7. Чăваш Республикин Правительстви "Чăваш наци радио" автономи учрежденийĕ туса хунине питех те пĕлтерĕшлĕ ĕç тесе хаклатпăр, çак радио хумĕсем çине халăхăмăрăн паянхи пурнăçпа туллин çутатма, чи çивĕч ыйтусемпе тишкерÿ /аналитика/ передачисем ытларах кăларма сĕнетпĕр;

8. Тутарстан правительствине – Тутар радиора чăваш программине çĕнĕрен йĕркелеме, Чĕмпĕр облаç Правительствине – "Эткер" телепрограммăн эфир вăхăтне пысăклатма, Самар облаç правительствине – чăвашла радио- е телепрограмма уçма.

Шупашкар,
2009, пуш, 20.